# Районăн харсăр çыннисем



Проект Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пурнăçа кĕрсе пырать

# Тăрмăшсемшĕн те, районшăн та ĕçĕсем курăмлă

**«Авторитетлă, хастар чунлă, кирек мĕнле ĕçе пуçăнсан та пĕтĕм вăй-халне хурса, вĕçне çитеретех»,–терĕ кĕскен кăна Тăрмăш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Вероника Николаева ял активисчĕ Вячеслав Сидоров çинчен сăмах хускатсан.**

**Чăнах та, Вячеслав Гаврилович кашни çынпах пĕр чĕлхе тупма пĕлет. Юлташĕсемпе пĕр-пĕр ĕç пуçарсан та ялти ытти çынсене явăçтарать. Ушкăнпа вара ĕç ăнăçатех. Тĕслĕх шыраса аякка кайма кирлĕ мар пулĕ. Аслă Çĕнтерӳĕн 75 çулхи юбилейне хатĕрленсе, ялти пуçарусăсем – çар службин, тĕрлĕ хирĕçтăрусен ветеранĕсем – кăçалхи çул пуçламăшĕнче «Турмышское боевое братство» ушкăн йĕркелерĕç. 8 çынран тăракансенĕн кашнин хăйĕн тивĕçĕ. Тĕллевĕ вара – фронтовиксен ячĕпе лартнă палăка тирпейлесе тăрасси, çавăн пекех пограничниксене, десантниксене, моряксене, вырăнти хирĕçӳсенче çар тивĕçне пурнăçланă ветерансене халалласа стелăсем тăвасси, вĕсене Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин паттăрĕсене асăнса лартнă Мухтав монуменчĕн территорине вырнаçтарасси. Укçа-тенкĕ пухассине (120 пин тенкĕ), тĕрлĕ хатĕрсене заказ парса кӳрсе килессине хăй çине илнĕ Вячеслав Сидоров. Çапла Тинĕс-Çар Флочĕн кунĕ тĕлне моряксен ячĕпе стела уçассипе хĕрӳ ĕç пуçланнă, халĕ çак ĕçе вĕçленĕ ĕнтĕ.**

**Иртнĕ канмалли кунсенче вăл Коломна хулинчен тинĕс якорьне илсе килнине, ăна вырнаçтарса хунине сăн ӳкерчĕкпех ярса пачĕ. Асăну обелискĕсене пĕтĕмпех ыр кăмăллăха хутшăнакан çынсен укçи-тенкипе тăваççĕ. Ялти Александр Платонов пирки те чăн-чăн патриот, терĕ. Çамрăк ăрăва çарпа патриотизмла воспитани парассине тивĕçлĕ тӳпе хывнине, часчасах тĕл пулусене хутшăннине асăнчĕ. 2017 çулта вăл хăй вăйĕпе ялта пĕрремĕш стела «Пограничниксен юпи» лартнă.**

**«В честь мужества, героизма и во славу Военно-Морского Флота» тесе çырнă стелăна часах савăнăçлă лару-тăрура уçĕç. Çапла, Вячеслав Гаврилович тăван еншĕн, пулас ăрушăн нумай сăваплă ĕç тăват.**

Вячеслав Сидоров 1951 çулхи январĕн 3-мĕшĕнче Тăрмăш ялĕнче çуралнă. 1969 çулта Канашри педучилищĕрен вĕренсе тухнă. Вăрнар районĕнчи вăтам шкулта музыка учителĕнче ĕçленĕ çĕртенех çар службине илнĕ (1969–1971). Салтакран килсен Шупашкар хулинчи заводсемпе стройкăсенче тăрăшнă. Тăван яла таврăнса 1976–1981 çулсенче «Урожай» спорт обществин председателĕнче, районти спорт комитечĕн ертӳçине тăрăшнă. Ленин ячĕллĕ колхозра профком председателĕнче ĕçленĕ. 1987–2019 çулсенче Тăрмăшри вăтам шкулта НВП, историпе право, обществознани предмечĕсене вĕрентнĕ. 1996–2003 çулсенче вăтам шкул директорĕ пулнă. ЧПУра заочно майпа аслă пĕлӳ илнĕ. Аслă категориллĕ учитель.

## Сĕрме купăс, савăнăçлă тусăм

Вячеслав ачаранах юрă тĕнчине çывăх пулнă. Ашшĕпе амăшĕ те, ратнери тăванĕсем те кăмăлланă юрра-кĕвве. Пĕррехинче кӳршĕллĕ пурăнакан Уляна Коли купăс каланине куç илмесĕр сăнаса ларакан ывăлне курсан ашшĕ чăтса тăрайман, икĕ ретлĕ хромка купăс туянса панă. Каярахпа – чаплăраххине. Çапла аслă юлташĕн аллисен вылявне сăнасах арçын ача хăй тĕллĕнех музыка инструменчĕсене алла илсе пынă. Шкулта вĕрентекен Вячеслав кĕвве тĕрĕс кăларнине, юрланине палăртнă. «Юрлас ăсталăхне колхоз хорĕнче те, учительсемпе шкул ачисен хорĕсенче, пултарулăх конкурсĕсенче туптанă. Сасси уçă та вăйлăччĕ, янăравлăччĕ»,– терĕ «Тăрмăш» халăх фольклор ушкăнĕн ертӳçи Елена Матросова.

Маттур çамрăк 8 класс пĕтерсен Канашри педучилищĕри музыка уйрăмне çăмăллăнах вĕренме кĕнĕ. Салтак тивĕçне пурнăçланă хыççăн Вячеслав Сидоров Шупашкарти заводсемпе стройкăсенче 5 çул тар кăларса тĕрлĕ професси алла илнĕ.

–Пурнăçăм тӳрременĕх музыка ĕçĕпе çыхăнмарĕ пулсан та ӳпкелешмелли çук. Сцена ăсталăхĕнчен нихăçан та айккинче тăман эпĕ, халĕ те чун-чĕре илемлĕ кĕвĕпе тулли, вăл манăн пурнăç юлташĕ,–тет вăл. Купăсçăсемпе е вĕрсе каламалли оркестрпа, е арçынсен ансамблĕпе куракансем умне тухса, пур çĕрте те хапăллăн йышăнни вăйхăват парса тăнă ăна. Таçта та çитнĕ хут купăсĕпе. Республикăри пысăк уявсенче те, районта иртекен смотрконкурссенче ял тата Тăвай ен артисчĕсемпе чи лайăххисен йышне кĕнĕ **(сăн ӳкерчĕкре)**. Юрăçсен ушкăнĕн ертӳçи те пулнă пĕр хушă. Ленин ячĕллĕ хуçалăхра профком председателĕнче ĕçленĕ çулсенче культура пурнăçне лайăхлатма нумай вăй хунă В.Сидоров. Пĕррехинче Захарпа Анастасия Заволокинсем ертсе пыракан «Играй, гармонь любимая!» кăларăма пăхса ларнă май, Вячеслав Гаврилович Тăрмăш ялĕнче купăс лайăх калакан 64 çынна шутласа кăларнă. Часах ялти клубра «Янра, хуткупăс, савăнăçлă тусăм» ятпа пултарулăх концерчĕ иртнĕ. Çав вăхăтри ăста купăсçăсенчен Нина Семеновна ырăпа асăнчĕ. «Тăрмăш» халăх фольклор ушкăнĕпе уявсене илем кӳрет, ял халăхне, хăнасене праçникенсенче юрлаттарса -ташлаттарса савăнтарать.





## Сывă пурнăç – ырă пурнăç

Мĕн ачаран футбол вăйăйипе туслă В.Сидоров. Унăн пуçарăвĕпе 1960 çулсенче Тăрмăшра 4 урам команди пĕр-пĕринпе ăмăртнă. Каярах вăйлă вылякансенчен ялăн пĕрлештернĕ команди чăмăртаннă. 1975 çулта тăрмăшсем пуçласа район чемпионĕ пулса тăнă. Сăмах май, ăмăртусен кашни кăтартăвнех асра тытать Вячеслав Сидоров. Çакăн хыççăн 42 район чемпионатĕнчен 23 хутĕнче пĕрремĕш вырăна тухнă ял команди, ыттисенче – призерсем. Кун пек чаплă кăтарту паянхи куна районта пĕр ялăн та çук. Тăвай енри пĕрлештернĕ футбол команди (ку вăхăтра В.Сидоров районти ДСО «Урожай» ирĕклĕ спорт обществине ертсе пынă, вăлах районăн пĕрлештернĕ командине йĕркеленĕ, унăн капитанĕ-ертӳçи пулнă) республика кубокĕшĕн кĕрешсе 1978 çулта 29 ял команди хушшинче пысăк çитĕнӳ тунине, финала тухса иккĕмĕш вырăн йышăннине хавхаланса аса илчĕ спорт ветеранĕ. Яштака та çирĕп шăм-шаклă арçын çине пăхсан ăна никам та 70 çула çывхарать тесе калаймĕ. Спортпа туслă пулни сывлăх çине ырă витĕм кӳрет, ав. Çулленех районти аслă ӳсĕмри футболистсен турнирне ирттерессине йăлана кĕртнинче те унăн тӳпи пурах. Ку енĕпе Тăвай, Тăрмăш, Пуянкасси ялĕсенчи ветерансен ырă тĕслĕхне палăртрĕ. «Спорт – пурнăç йĕрки» проектпа килĕшӳллĕн, сывă пурнăç йĕркине тытса пыраксемпе туслисен йышĕ 2022 çул тĕлне республикăра 55 процент пулмалла. Спорт инфратытăмне аталантарас тĕллевпе ялсенчи пурлăхпа техника базине лайăхлатмалла тесе шутлать Вячеслав Гаврилович. Ку енĕпе тăрмăшсенчен вĕренмелли пурах. Пуçарулăх бюджечĕн мелĕпе усă курса иртнĕ уйăхра ялти стадионта тăрăсемпе витсе 5 тренажер вырнаçтарнă (урам тренажерĕсем), юнашарах пĕлтĕр ĕçе кĕнĕ хăтлă сквер иртен-çӳрене йыхравлать. Канмалли кунсенче халăх йышлă кунта. Ял çыннисемшĕн чăннипех вăхăта усăллă ирттермелли кану вырăнĕ пулса тăчĕ. «Хăтлă хула хăтлăхĕ» проектпа пурнăçланă ăна. Çак кунсенче кунти стадионта ача-пăча площадки хута кайрĕ. Савăнаççĕ ачасем кунта выляса. «Пуçарулă бюджетпа кăçал 4 проект пурнăçланать,– пĕлтерчĕ ял тăрăхĕн пуçлăхĕ В.Николаева. – Вячеслав Гаврилович ял тăрăхĕн ĕçĕнче нумай пулăшать. Çĕнĕлĕхсене пурнăçа кĕртессипе канашлатпăр унпа. Сăмахне нихăçан та çилпе вĕçтермест. Пурнăç таппипе тан утакан çын вăл».

## Музей – халăх тупри

Музей Вячеслав Сидоровшăн иккĕмĕш кил пулса тăчĕ. Пĕтĕм коллектив хутшăннă шкулти историпе краеведени музейне йĕркелеме. Ырă кăмăллă çынсем, спонсорсем укçа-тенкĕ енĕпе нумай пулăшнă. Ялсен, ку тăрăхра вырнаçнă социаллă объектсен историйĕпе кăсăкланса паллашаççĕ курма килекенсем. Орденсемпе ытти хисеплĕ ятсене, наградăсене тивĕçнĕ çынсен, ку тăрăхран тухнă паллă спортсменсен сăн ӳкерчĕкĕсем чылай кунта. Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 75 çул çитнине халалланă материалсен, вăрçă паттăрĕсемпе çыхăннă фото тата документсен архивĕ пуянланса пырать. Ĕлĕкхи савăт-сапапа ĕç хатĕрĕсем, наци тата ĕç тумĕсем, тĕрлĕ инструментсем: куракансемшĕн кăсăкли сахал мар. Экспонатсен фончĕ çуллен ӳссе пырать. Музей патриотизм темипе ирттермелли мероприятисен вырăнĕ те пулса тăнă **(сăн ӳкерчĕкре)**.

**Светлана НИКОЛАЕВА, Тăрмăш шкулĕн директорĕ:**

«2012 çулта Тăрмăш шкулĕнче директорта ĕçлеме пуçласан мана шăпа Вячеслав Гавриловичпа тĕл пултарчĕ. Вăл ертӳçĕ ĕçĕнче питĕ кирлĕ канашсем парса пулăшса пычĕ. Унăн сĕнĕвĕсемпе усă курса, коллектив пулăшса пынипе кирек мĕнле ĕçе те ăнăçлă туса пĕтерме пултартămăр. Тĕслĕхрен, фойере вăл тăрăшнипе тунă илемлĕ стендсем куçа илĕртеççĕ. Шкул гербне тума ун канашĕпе пуçăнтăмăр. Шкул музейне аталантарас, пуянлатас тесе нумай вăй хучĕ. Халĕ вара музее тепĕр пӳлĕм хушса анлăлатасшăн. Вячеслав Гаврилович хальхи вăхăтра тивĕçлĕ канура пулин те чунĕпе яланах шкулшăн çунать, музее пуянлатассипе пĕтĕм вăй-халне парать. Ырă та ăшă чун-чĕреллĕскер çынна яланах пулăшма хатĕр».

(Малалли 4-мĕш стр.)

# Тăрмăшсемшĕн те, районшăн та ĕçĕсем курăмлă

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 3-мĕш стр.)

## Хисеплĕ таврапĕлÿçĕ

Чăваш таврапĕлÿçĕсен пĕрлĕхĕ 2016 çулта Вячеслав Гавриловича «Хисеплĕ таврапĕлÿçĕ» ят парса чысланă. Тĕпчев ĕçĕнчи пултарулăхĕ пирки Эдуард Сергеевич Ушаков краеведран ытла камах тĕплĕн каласа пама пултарĕ-ха? Вăл вара пысăк хак пачĕ унăн ĕç-хĕлне.

**Эдуард УШАКОВ, Тăрмăш ялĕнчи таврапĕлÿçĕ:**

«Вячеслав Гаврилович – Тăрмăш ял историне чи лайăх пĕлекенсенчен пĕри. Эпир унпа нумай çул тачă çыхăнса хамăр тăрăхри ялсен историйĕпе культурине тĕпчетпĕр. Пĕрлехи пĕрремĕш ĕç – Н.А.Кадикин пухса хатĕрленĕ «Наша школа» ал çырăвне çутта кăларни пулчĕ. Вячеслав Сидоров тăрăшнипе пулас кĕнекен чылай пайĕсене тепĕр хут шкул архивĕнчи ĕç хучĕсемпе тишкерсе тухнă, хăш-пĕр пайĕсене хушса çырнă. Ун хыççăн Тăрмăш ял историйĕн иккĕмĕш кăларăмне хатĕрлеме чылай пулăшрĕ. Лачкасси ял историне çырнă чухне вăл кĕнеке редакторĕ пулчĕ. «Госсортучасток. Детский сад» кĕнеке валли материалсене иксĕмĕр те хавхалансах хатĕрлерĕмĕр. Мĕншĕн тесен эпир ача чухне сортсем хатĕрлекен участокăн бригадинче ĕçлесе ÿснĕ.

Унпа ĕçлеме çăмăл, пĕрпĕрне çур сăмахранах ăнланатпăр. Вăрçа хутшăннисен кун-çулне тĕпчесе «Воины-турмышцы. Они сражались за Родину», «Астăвăм» кĕнекесене хатĕрленĕ чухне тĕрлĕ статьясем çыртăмăр. Район тата АПК ветеранĕсен энциклопедийĕсем валли те икĕ ялти паллă çынсем çинчен чылай материал пухрăмăр. В.Сидоров ял тăрăхĕнче пулса иртекен событисен хронологи спискокне туса, ăна малалла çырса пырать. Çав список 1563 çулта Тăрмăш ялĕ çинчен пĕрремĕш хут асăннипе пусланать. Паянхи куна 170 пулăма палăртнă. Ку ял историйĕшĕн питех те хаклă.



## Интернет усăлăхне парăнтарнă... Мускавра çĕнтернĕ

Астăватăр пулĕ, «Раççейри пенсионерсен Союзĕ» общесвăлла организацин вырăнти уйрăмĕн пуçарăвĕпе ялсенчи шкулсенчи тивĕçлĕ канури çынсене компьютерпа ĕçлеме вĕрентес тĕллевпе ятарлă занятисем ирттернине. Тăрмăшри В.Сидоров интернет усăлăхне хăвăрт алла илсе, тĕрлĕ енлĕ тупăшусенче районта тата Чăваш Енре çĕнтернĕ, Чĕмпĕрте иртнĕ Пĕтĕм Раççейри конкурсра чăваш команди (иккĕн хутшăннă) чи лайăх результат кăтартнă. Тепĕр çулне, 2014 çулта, Мускаври Г.В.Плеханов ячĕллĕ экономика университетĕнче 130 ытла пенсионер хушшинче «Патшалăх услугисен порталĕпе ĕçлесси» номинацире чи пысăк балл пухса икĕ кунлă тупăшура çĕршыв чемпионĕ пулса тăнă **(сăн ÿкерчĕкре)**. Вячеслав Гаврилович çĕр-çĕр ачана пурнăç çулĕ çине тăма пулăшнă, çакăн хыççăн вара ялти ватăрах çынсемшĕн те вĕрентекен пулса тăнă. Халĕ те тĕрлĕ канаш ыйтма пыраççĕ ун патне. Час-часах интернет урлă е телефонпа ыйтусем килеççĕ. Инçетре пурăнакан тăрмăшсем хăйсен тăванĕсене, ĕлĕкхи-авалхи йăх-тымарĕсене шыраççĕ. В.Сидоров нумай çын ыйтăвĕсене тивĕçтерет, темиçе ĕмĕр каялла кăларнă переписьсем тăрăх вĕсене тупма, йĕрĕ çине ÿкме пулăшать.

## Çемье вăй-хăват кÿрет

Çемье – вăй-халпа хавхалану кÿрекен хăватлă çăлкуç. Мăшăрĕпе яланах пĕр-пĕрне ăнланса та пулăшса, килĕштерсе пурăнаççĕ. Татьяна Владимировна Тăрмăш шкулĕнче нимĕç чĕлхи учителĕнче ĕçленĕ. Халĕ канура. Виçĕ ачине ăслă-тăнлă та ĕçчен ÿстернĕ Сидоровсем. Сăмах май, виççĕшĕ те аслă пĕлÿ илнĕ. Асли Дмитрий Тăвайри газ участокĕн начальникĕнче ĕçлет. Павелпа Саманта Питĕрте тĕпленнĕ. Хĕрĕ 8 уйăхри мăнукĕпе ашшĕ-амăшĕ патне хуларан килсе ситнĕ нумаях пулмасть. Питĕ тунсăхланă, пĕтĕм юратăвне, чун ăшшине параççĕ халĕ пĕчĕкскерне.

Татьяна Владимировнапа Вячеслав Гаврилович паян 3 мăнукпа киленеççĕ. Çемьере юратупа шанчăклăх, хăтлăх пур çĕрте ăнăçу, ырă ĕçсем хуçаланаççĕ.

Ĕçри ситĕнÿсемшĕн, район аталанăвне пысăк тÿпе хывнăшăн В.Г.Сидорова тĕрлĕ шайри Хисеп хучĕсемпе Тав çырăвĕсем парса наградăланă. Раççей Федерацийĕн вĕрентÿпе ăслăлăх министерствин Хисеп грамотине тивĕçнĕ. Вăл – Тăрмăш ял тăрăхĕн хисеплĕ гражданинĕ. Ял халăхĕ темиçе хутчен ял тата район совечĕсен депутачĕ пулма шаннă. «Чăваш АССР музыка обществин тава тивĕçлĕ деятелĕ» (1995 ç.) тата «Чăваш этнокультурин тава тивĕçлĕ деятелĕ» (2018 ç.) те вăл.

**Р.ШУМОВА.**

## ПУЛĂШУ

# Çынсем кăмăллă

**Чăваш Ен Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Олег Николаев пуçарăвĕпе уйрăм хушма хуçалăхра ĕне усракансене субсиди парассипе пирĕн районта та ĕçлеççĕ.**

Аса илтеретпĕр, укçа-тенке кашни вырăх тĕлĕшпе параççĕ: пĕр ĕнешĕн – 2300 тенкĕ, икĕ ĕнешĕн – кашнин пусне 3300 тенкĕ, 3 е ытларах пулсан – 4300-шер тенкĕ.

Утă уйăхĕн 9-мĕшĕ тĕлне килти хушма хуçалăхра ĕне тытакан 817 çынран субсиди илме ыйтса заявлени пырса кĕнĕ. Çапла вара патшалăх пулăшăвĕ вĕсен харпăрлăхĕнчи 1056 ĕнешĕн тивĕçмелле.

Субсиди илме документсене хатĕрлессине Енĕш Нăрваш, Тушкил тата ытти ял тăрăхĕсенче аван йĕркеленине палăртмалла. Районти ялсенчи хуçалăхсене 2 млн. та 988 пин те 300 тенкĕ куçарса панă, вырăх хуçисем укçине илнĕ те ĕнтĕ.

Патшалăх пулăшу панипе кăмăллă пулнине палăртаççĕ çынсем. «Кăçал тепĕр хутчен, малашне вара çулленех пулăшу парса тăрсан ĕне тытакансем те йышлăланĕç. Субсиди укçине вырăх апачĕ туянма усă курăпăр, тырри-пуллине те, утă-улăмне те илмелле, вĕсене хамăр туса илес пулсан та тăкакĕ пĕчĕкех мар»,– теççĕ.

Çакăн пек пулăшăва ĕне тытакансем юлашкинчен 2010 çулта илнĕччĕ.

**А.ШАКИН,**
**Тăвай районĕнчи вырăх-чĕрлĕх чирĕсемпе кĕрешекен станци начальникĕ.**

## ХĂРУШСĂРЛĂХ

# Шыв тимлĕх ыйтать

**Шăрăх кунсенче çынсем шыв хĕррине туртăнаççĕ. Шел, путса вилекенсем те çук мар. Раççей МЧСĕн Чăваш Республикинчи тĕп управленийĕн пресс-службин пĕлтернĕ тăрăх, утă уйăхĕн 7-мĕшĕнче Муркаш районĕнче 2 çын шыва кĕнĕ чухне пурнăçран уйрăлнă.**

Инкекенсен пĕри Çурлатăри ялĕ çывăхĕнчи кÿлĕре пулнă. 48-ти арçын юлташĕсемпе утă кĕртнĕ хыççăн шыва кĕме кайнă. Ишме пĕлмен, унсăр пуçне кăшт маларах эрех ĕçнĕ – путса вилнĕ. Тепĕр инкек Автанкасси çывăхĕнче, Мăн Шетмĕ шывĕн пĕвинче, пулнă. 27-ри арçын шыва ун çийĕн иртекен пăрах çинчен сикнĕ. Шел, каялла тухайман.

ЧР пĕчĕк карапсен патшалăх тĕп инспекторĕ Герман Майков шăрăх кунсенче пĕве-кÿлĕре харăсах темиçе инкек пулнине пĕлтернĕ. Акă утă уйăхĕн 7-мĕшĕнче Патăрьел районĕнче виçĕ çамрăк арçын эрех ĕçнĕ хыççăн шыва кĕме аннă. Пĕри путма пуçланă, юрать, пĕрле канакансем ăна туртса кăларнă. Çитĕннĕ çынсем путса вилнин тĕп сăлтавĕ – вĕсем эрех ĕçсе тата ятарласа хатĕрлемен вырăнсенче шыва кĕни. Ачасем вара хăйсем тĕллĕнех, аслисемсĕрех, пĕве-кÿлĕ хĕррине кайнăран шар кураççĕ. Ашшĕ-амăшĕн ачисене хăйсем тĕллĕн кăна шыва кĕме ямалла мар. Шыв хĕррине пĕрле кайсан та вĕсене куçран вĕçертме юрамасть. Çитĕннисем те пĕве-кÿлĕ хĕрринче хăрушсăрлăх йĕркине çирĕп пăхăнмалла. Шыва тÿрех сикмелле мар. Шăрăх вăхăтра кĕлетке те хĕрет, шыв температури вара ун пекех пысăк мар. Шыв тĕлĕнче тата сивĕрех. Пĕвене тÿрех сиксен е ÿсĕрле кĕрсен шăнăр туртма, чĕре тапмашкăн чарăнма пултарать, çын сывлайми пулас хăрушлăх пур. Çавăнпа шыва кĕриччен кĕлеткене кăштах хăнăхтармалла, малтан алă-урана йĕпетмелле. Çак йĕркесене пăхăнмасан кану инкекпе вĕçленме пултарать. РФ МЧСĕн Чăваш Енри тĕп управленийĕ пĕлтернĕ тăрăх, иртнĕ канмалли кунсенче Чăваш Енре тата тепĕр 4 çын путса вилнĕ: Муркаш районĕнче – 2, Вăрмарта тата Çĕнĕ Шупашкарта – 1-ер. Республикăра утă уйăхĕн 13-мĕшĕ тĕлне шыв объекчĕсенче 18 инкек пулнине шута илнĕ, 17 çын путса вилнĕ, çав шутра – 2 ача, 1 çынна çăлнă.

**А.ФЕДОРОВ.**

## ПЕНСИСЕМ

# Ĕçлекен пенсионерсен пенси ÿсет

**«Российская газета» тата Пенси фондĕнчен хыпарланă тăрăх, августăн 1-мĕшĕнчен тытăнса ĕçлекен пенсионерсен пенсине ÿстереççĕ.**

Çакă вăл çулленхи процедура пулса тăрать. РФ правительстви çумĕнчи финанс университечĕн проректорĕ Александр Сафонов каласа панă тăрăх, ĕçлекен пенсионерсен пенсине корректировка тăвассине страхланă пенсисем пирки калакан саккунра пăхса хунă. Енчен те пенсионер ĕçлеме пăрахмасть пулсан, унăн ĕç укçинчен пенсин страховани взносĕсене тытса пыраççĕ. Çавна май унăн пенсине те вăхăтран вăхăта корректировка тума тивĕç. Çулленхи ÿсĕм пенсин виçĕ балĕнчен ытла пулаймасть. Иртнĕ çул пенси коэффициенчĕн (балĕн) хакĕ 87 тенкĕ е 24 пуспа танлашнă. Апла пулсан пенси ÿсĕмĕ чи пысăкки 261 тенкĕ те 72 пус пулма пултарнă. Кăçал пенси балĕ 93 тенкĕпе танлашать. Çавăнпа та ĕçлекен пенсионерсен пенсийĕ те чи нумайĕн 279 тенкĕ ÿсме пултарать.

2019 çулта ĕçлекен пенсионерсем 14 млн çынна яхăн пулнă. 2016 çултан тытăнса ĕçлекен пенсионерсен пенсийĕсене вĕсем ĕçлеме пăрахсан кăна индексацилеççĕ.

Пенсионер ĕçлесе пухнă пенси балĕсен шутне унăн актуаллă хакĕ çине хутлаççĕ. Пулнă сумма çумне фиксированнăй тÿлев виçине (2020 çулта вăл 5686 тенкĕ те 25 пус) хушаççĕ. Балсем мĕн чухлĕ нумайрах, пенси çавăн чухлĕ пысăкрах пулать.

Ĕçлекен пенсионерсен пенсийĕн корректировкине автоматлă майпа ирттереççĕ. Çавăн пекех августăн 1-мĕшĕнчен тытăнса çынсен пухăнакан пенсийĕсене те çĕнĕрен шутласа параççĕ. Пенси фондĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, пухăнакан пенсисене инвестицилени шута илсе, вĕсене 9,13 процент ÿстереççĕ. Ку вăл инфляциren 3 хут пысăкрах. Пухăнакан пенси 80 пин çыннăн ÿсĕ.

Пухăнакан пенси ĕç паракан куçарса пынă страховани взносĕсенчен тата инвестици тупăшĕнчен йĕркеленет. Ўлĕм патшалăх пенсисене хушса финанслассин программине хутшăнакансене, укçа суммине пухăнакан пенсипе мар, сроклă пенси тÿлевĕпе илекенсене пырса тивет. Кун пек пенсие 32 пин çын илсе тăрать. Августран вĕсен пенси ÿсĕмĕ 7,99 процент пулать. Пухăнакан пенсин вăтам виçи уйăхне 956 тенкĕпе танлашать, срокпа паракан пенси тÿлевĕ – уйăхне 1705 тенкĕпе. Икĕ йышши пенси тÿлевне те хĕрарăм 55 çул, арçын 60 çул тултарсан е срокран маларах пенсие тухма право пур чухне пама тытăнаççĕ.

Енчен те пухăнакан пенси виçи пĕтĕмĕшле пенси калăпăшĕн 5 процентĕнчен пĕчĕкрех пулсан, ку укçатенке çын пенсие тухнă чухне пĕр хут парса тÿлесе тăраççĕ. РФ Ĕç министерствин даннăйĕсемпе килĕшÿллĕн, пенсие тухакансен 98,7 проценчĕ пухăнакан пенси тÿлевĕн укçи-тенкине паян шăпах çапла майпа илет.